ŋqdqɐeɎ bɆ dədɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɐ Ɉqddɏqɐè

УМ CĂMAX

Сирĕн алăра – «Чăваш чĕлхи: аваллăхран малашлăха» ятпа тухакан иккĕмĕш кĕнеке. Çак ярăмри статьясен малтанхи пуххине А.П. Хусанкай – Василий Георгиевич Егоров профессор çуралнăранпа 120 çул çитнĕ май – 2000 çулта хатĕрленĕччĕ. Акă ĕнтĕ иккĕмĕш пухăм калăпланса тухать. Ăна вара Николай Андреевич Резюков чĕлхеçе халаллатпăр. Вăл çуралнăранпа килес çул 110 çул çитет.

Вырăспа чăваш чĕлхисен шайлаштаруллă грамматикин («Сопоставительная грамматика русского и чувашского языков») авторĕ, Н.И. Ашмарин профессорăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекин» чылай кăларăмне пичете хатĕрлекенĕ – вăл ăслăлăхра та, вĕрентӳре те палăрса юлнă. Çирĕм çул ытла чăваш шкулĕсем Николай Андреевич хатĕрленĕ «Чăваш чĕлхипе» вĕреннĕ, вăл майлаштарнă орфографи тытăмĕпе тата программа тавраш ĕпе усă курнă. Сирĕн умри кĕнеке ăна асра тытмалли хăйне евĕр палăк пултăр.

«Чăваш чĕлхи: аваллăхран малашлăха» статьясен пуххинче эсир Н.А. Резюков пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен те, Н.И. Ашмаринăн 17 томлă словарĕ пирки те çĕннине нумай пĕлме пултаратăр. Эпĕ хамăн статьяна архив документчĕсене тĕпе хурса çыртăм. Истори наукисен кандидачĕн Е.П. Погодинăн ĕçĕ – тĕрлĕ ăслăхсен тĕпчев мелĕпе усă курса хатĕрленĕ психологи портречĕ (унччен вăл Н.Я. Бичурин, Л.Н. Гумилев, П.В. Денисов, В.Д. Димитриев, Н.В. Никольский, М.П. Петров-Тинехпи, М.И. Скворцов ăсчахсем çинчен кун йышши тишкерӳсем пичетленĕччĕ). Николай Андреевича астăвакан сумлă çынсем, педагогика ĕçĕн ветеранĕсем А.С. Канюкова, И.Я. Тенюшев, Б.Л. Тихонов (Борлен) мĕн калани уйрăмах паха. Хисеплĕ ĕçтешĕмĕр С.П. Юшков та хăйĕн асаилĕвĕсене çырма пуçланăччĕ: шел, ĕлкĕреймерĕ – пĕлтĕр пурнăçран уйрăлса кайрĕ. Çак кĕнеке валли статья хăварнă В.А. Андреев чĕлхеçĕ те текех пирĕнпе çук ĕнтĕ. Вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, ырă ячĕ асăмăртан тухас çук...

Пухăмăн иккĕмĕш пайне чăваш чĕлхи аталанăвĕпе çыхăннă тĕпчевсем кĕчĕç. Вĕсен авторĕсен йышĕнче: Чăваш патшалăх

ŋqdqɐeɎ bɆ dədɆbɎɜə d ɕɔɑbɔɐ Ɉqddɏqɐè

ŋqdqɐeɎ bɆ dəqɆbɎзə d ɛɑqɔɐ Ɉqddʎqɐè

гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн сотрудникĕсем Е.И. Батченкăпа Г.Ф. Юмарт, И.Н. Ульянов ячĕллĕ университетăн ăсчахĕсем В.И. Сергеевпа О.Р. Студенцов, педагогика университечĕн профессорĕ Н.П. Петров, пултаруллă çыравçă тата куçаруçă Е.Н. Лисина. «Этнокультура тĕпчевĕсенчи терминологи ыйтăвĕсем» темăпа гуманитари институтĕнче 2006 çулта иртгернĕ ăслăлăхпа практика конференцийĕн сĕнĕвĕсене А.П. Хусанкай пĕтĕмлетсе пачĕ. Хула шкулĕн ачисене чăваш чĕлхи вĕрентекен И.В. Дегтярёва тата Чăваш Республикин патшалăх пичет архивĕн пай пуçлăхĕ С.В. Налимова Николай Андреевич Резюковпа çыхăннă библиографи кăтартмăшне хатĕрлерĕç.

Статьясен пуххине кăларма, рецензилеме хутшăннă ĕçтешсене пурне те чĕререн тав тăватăп. Пĕрлехи вăйпа калăпланнă кĕнеке тăван культурăпа ăслăлăх талккăшĕнче хăй вырăнне тупасса шанатăп.

Геннадий Дегтярёв

ŋqdqɐeɎ bɆ dəqɆbɎзə d ɛɑqɔɐ Ɉqddʎqɐè